**И.Н. Юркин**

# Халапсем

## Сказки

**Москва**
**«Книга по Требованию»**

УДК 93
ББК 63.3
И11

**И.Н. Юркин**

И11 Халапсем: Сказки / И.Н. Юркин – М.: Книга по Требованию, 2022. – 38 с.

**ISBN 978-5-458-09198-5**

На чувашском языке.

**ISBN 978-5-458-09198-5**

© Издание на русском языке, оформление
«YOYO Media», 2022
© Издание на русском языке, оцифровка,
«Книга по Требованию», 2022

Эта книга является репринтом оригинала, который мы создали специально для Вас, используя запатентованные технологии производства репринтных книг и печати по требованию.

Сначала мы отсканировали каждую страницу оригинала этой редкой книги на профессиональном оборудовании. Затем с помощью специально разработанных программ мы произвели очистку изображения от пятен, клякс, перегибов и попытались отбелить и выровнять каждую страницу книги. К сожалению, некоторые страницы нельзя вернуть в изначальное состояние, и если их было трудно читать в оригинале, то даже при цифровой реставрации их невозможно улучшить.

Разумеется, автоматизированная программная обработка репринтных книг – не самое лучшее решение для восстановления текста в его первозданном виде, однако, наша цель – вернуть читателю точную копию книги, которой может быть несколько веков.

Поэтому мы предупреждаем о возможных погрешностях восстановленного репринтного издания. В издании могут отсутствовать одна или несколько страниц текста, могут встретиться невыводимые пятна и кляксы, надписи на полях или подчеркивания в тексте, нечитаемые фрагменты текста или загибы страниц. Покупать или не покупать подобные издания – решать Вам, мы же делаем все возможное, чтобы редкие и ценные книги, еще недавно утраченные и несправедливо забытые, вновь стали доступными для всех читателей.

Серия Книжный Ренессанс
www.samizday.ru/reprint

леççĕ. Кусем—„сăра ĕçтертĕмĕр“, теççĕ. Хăйсем татах нӯхрепрен сăра ăсса кĕрсе çак çынсене тăраниҫҫен ĕçттереççĕ. Мухмăрĕсем пĕтеççĕ; хăйсем каллех ĕлĕкхи пек ӯсĕр пулаççĕ. Çавăнтан вара вĕсенҫен курсах ыттисем те хăйсем валли çапла сăра тăва пуçларĕç, тет.

## 2.

## Патша ывăлĕпе ҫимĕрçĕ ывăлĕ.

Патша арăмĕ, йывăр çын, вăрман-пахҫинҫе хăйĕн савнă çыннине çӯренĕ ҫухне ăшĕнҫи аҫи: «вăрăпа вăрă çӯрет, йасар çынпа йасар çын çӯрет, лайăх çынпа лайăх çын çӯрет», тет. Çак сăмахсене илтсен, патша арăмĕ кăна çуралсанах вĕлерме шухăшлаĭ. Çуратас вăхăт çитсен, патша арăмĕ аҫа туннă вăхăтра тимĕрçĕ арăмĕ те аҫа тăваĭ. Патша арăмĕ хăй аҫине вĕлерес вырăнне çав тимĕрçĕ арăмĕ аҫипе улăштарттараĭ. Патши ăна-кăна пĕртте пĕлмест. Хăй аҫа ӯссен, патша çав тимĕрçĕ аҫине йывăç пăхҫинҫе (сатра) çӯреҫухне вăрăм йывăççене аван ҫăршăсене курсан. „ку йыçран ай-хăй кăмăрăк нумай пулĕҫҫĕ“, тет. Ку мĕшĕн апла калаçнине патши пĕртте пĕлмест, ăнланаймасĭ. Патша аҫи тимĕрçĕ патĕнҫе йалан аҫа-пăҫасем пуçтарса вĕсене салтакла чыҫатаĭ, мĕн тăваĭ. Пысăкрах ӯссен, пĕр йенелле кайса çапла темĕн ҫухлĕ çын пуçтарса вĕсене салтакла вĕрентет те ашшĕ килне, патша çуртне, вăрçăпа пыраĭ. Вăл вăхăтра килĕнҫе амăшĕ кăна пулаĭ. Амăшĕ кăна палласа:—„есĕ çапла-çапла çынсем пуçтарса салтакла выҫатса пурăнатăн, аçу

сапа унпӑн вӗлерттерӗ. Есӗ кунта ҫухне аҫу килес умӗн ҫак арҫана пытан“, тет. Ку арҫана пытансанах амӑшӗ ҫав арҫа ҫине улӑхса ларса:—«патша ҫинҫе ларатӑп, патшана куратӑп», тесе калаҫса ларать. Патши те хӑй арӑмӗ ҫапла калаҫса ларнине илтсен:—«есӗ мӗн калаҫатӑн? Йе ухмахланатӑн?« тесе ыйтать. Арӑмӗ те:—«хай инкек киле килҫӗ», тет те арҫине уҫҫа упӑшкине кӑтартать. Апшӗпе амӑшӗ кӑна ҫакса вӗлерттерме шухӑшласа ҫакмалли йупасем лартта-раҫҫӗ, вӗренсем хатӗрлеттереҫҫӗ. Ҫакас вӑхӑт ҫитсен, кӑна ҫакмалли ҫӗре илсе кайаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтра ку:—„мана выҫама вӑхӑт парӑрҫӗ!“ тет. Кусем параҫҫӗ. Виҫӗ тапхӑр выҫаса илсен:—«малти урапана шуйттан илсе пырать, кайрине Турӑ», тет. Ку сӑмахсене мӗшӗн каланине пӗри те пӗлмеҫҫӗ. Ывӑлӗ каллех:—атте асту халӗ, санӑн туллӑна манӑн ҫӑхӑсем суйласа пӗтернӗ“, тет.

Апшӗ ҫавӑрӑнса пӑхсан, курах кайать, хӑйӗн салтакӗсене ывӑлийӗн салтакӗсем пӗтерннне. Йулашкинҫен амӑшне те вӗлерттерет.

## 3.

## Райа ҫакланнӑ.

Ӗлӗк пӗр карҫӑкпа пӗр старик пурӑннӑ. Старикки вӑрман касма тесе вӑрмана кайнӑ. Вӑрманӗ пит шултӑра пулнӑран, тытӑннӑ ку касмашкӑн вӑрманӑн пӗҫӗкҫӗрех тураҫӗсене. Улӑхса ларать турат ҫине те ҫав йывӑҫнех тытӑнать касмашкӑн. Вӑл ҫапла каснӑ вӑхӑтра иртсе кайакан ҫын ку ҫапла хӑй ларакан йывӑҫ туратне каснине кур-

сан:—„итле халĕ, есĕ ӳкетĕн!“ тесе каласа иртсе кайаҫ. Унҫҫен те пулмасҫ, хай ватă старик йывăр туратне кассан, тӳраҫҫĕпе пĕрле хăй те çĕре лаплатса ӳкет.—«Ку вара иртсе кайакан çын епĕ ӳкессе пĕлҫĕ-çке. Вăл, ахăр, епĕ хăçан вилессине те пĕлет пулĕ; çавна ыйтса пĕлем халĕ», тесе ун хыçĕнҫен ишекне кӳлсе ҫуптара пуçларĕ, тет. Хăваласа çитсен: „епĕ ӳкессе есĕ пĕлсеттĕн, епĕ хăçан вилессе те есĕ пĕлетĕн пулĕ, тархашшăн каласа парсамҫҫĕ?» тесе ыйта пуçлаҫ. Ку та хăйĕнҫен çапла ыйта пуçласан, нимĕн калама аптăраса, пăхса тăра пуçлаҫ.—«Тархашшăн есĕ каласа пар, есĕ пĕлетĕн?! тет. Ку ҫасах йепле каламаллине шухăшласа илсен:—„Есĕ ишекĕ виçĕ тапхăр хыçалтан шăршлă сывлăш кăларса йарсан (пăсарсан) вилĕн“,—тет. Апла каласан ку та ҫасрах урапи çине улăхса ларса калле килне тавăрăна пуçлаҫ. Çул çинҫе пынă ҫухне—ишекне хытăрах ҫуптăр тесе аллинҫи ҫăпăрккипе (пушипе) шарт çапаҫ. Ишекĕ çав вăхăтпа шарт тутарса хыçалтан усал шăршлă сывлăшне кăларса йараҫ. Ку та:—„Ах Турă, пуç ырата пуçларĕ!“ тесе кăшкăрса йараҫ. Пырсан-пырсан тата çапла ҫăпăрккипе шартлаттарса сăптăрсан, ишекĕ каллех çапла шартлаттарса ĕçерсе йараҫ....—„Ах Турă! ăш ырата пуçларĕ“,—тет. Хăй йалан хăваласса анҫах пĕлет. Йалне çитеспе киле ҫасрах çитесҫĕ, тесе ишекне тата хытă шарт тутарса çапаҫ. Ишекĕ те хăйне çапла хытă çапнăран, шарт! тутарса виççĕ мĕш тапхăр усал-шăршлă сывлăшне хыçалтан ĕçерсе йараҫ, Унҫҫен те пулмасҫ ку та ишекĕ виçĕ тапхăр шартлаттарса йанине илтсен, урапи çинҫен çĕре кĕрĕслетсе кайса ӳкет те: „акă вилетĕп! акă вилтĕм иккен!“—тесе каçса выртаҫ, тет. Лаши кĕпер урлă каçса кайса килне тавăрăнаҫ. Çав вахăтра вăл çулпа улмă

сутакан пӗр ӑлав улма тийесе пырат̌, тет. Кў ҫапла кӗпер патӗнҭе выртнине курсан, ку улма сутаканӑн лаши кунтан хӑраса, ӗрӗхсе кайса, улма ӑлавне, кун ҫине тўнтерсе хӑварҭӗ, тет. Ку вилни те хӑй ҫине улмасем тӑкӑннине курсан—„епӗ райра иккен, Турӑ мана улмасем паҭӗ“, тесе улмасем ҫисе выртса пуҫлат̌. Лешӗ лашине тытсан калле улмисене тийеме пырат̌. Ку ҫапла улмисене ҫисе выртнипе курсан:—„есӗ кунта мӗн ӗҫлесе выртатӑн?“ тесе ыйтат̌. Ку та ӑна хирӗҫ:„ епӗ вилтӗм, Турӑ мана райа кўртсе улмасем паҭӗ“, тет. Лешӗ кӑна аллинҭи ҭӗн ҭӑпӑрккипе пӗр—икӗ тапхӑр пит хытӑ ҭашлаттарса сӑптӑркаласа илсен, „*епӗ вилтӗм*“ тесе выртакан старик, ҭӗрӗлсе сиксе тӑҭӗ тет те, килне тара паҭӗ, тет. Тавӑрӑнсан, хӑй карҭӑкне: „епӗ лайан вилсен райа кӗрсеттӗм, унта мана Турӑ улмасем ҫитерҭӗ“, тесе каласа парат̌, тет.

## 4.

## Ҫуклӑхӗ каластарнӑ.

Икӗ ҫын арлӑ-арӑмлӑ пўртре ҭўреҭе умӗнҭе калаҫса ларасҫӗ, тет:—„Ех!“ тесе калат̌, тет пӗри.—„Турӑ пире пӗр ҫӗр тенкӗ укҫа кӑна паринҭҭӗ. Ытла пулсан та илмӗттӗм, кайа пулсан та илмӗттӗм“, тесе калат̌, тет. Кусем ҫапла калаҫса ларнӑ вӑхӑтра пӗр пуйан кўсем мӗн ҫинҭен калаҫнине иртсе кайнӑ ҭухне илтсе, кусенӗн ҭўреҭи ҫине вӑрттӑн йенҭӗкпе ҫӗр тенкӗрен пӗр тенкӗ кайа туса укҫа хурат̌. Кусем ирхине тӑрсан, ҭўреҭи ҫинҭе йенҭӗкпе укҫа выртнине курсан:—„Акӑ

Турă пире укçа панă иккен", тесе тытăнаççĕ сума. Çĕртен пĕр тенкĕ кайине пĕлсен, шухăшлаççĕ: „Кăна илес-и, илес мар-п?" тесе. Пайтахҫен шухăшласан, —„кунта 99 тенкĕ иккен, йенҫĕкне пĕр тенкĕ хисепленĕ пулĕ", тесе ку тăхăр-вун-тăхăр тенке илеççĕ. Вăрăсем вăрласа кайасран хăраса ниçта хума пĕлмеççĕ. Ҫӳреҫе çине укçа пырса хураканни кĕсем укçине ăçта пытарнине вăрттăн пăхса тăрай. Ку йурлă çыннисем йенҫĕкри Турă панă укçине кирлĕшĕн пăртак илеç-çĕ те ытлашшине шерте (шуҫă) тăррине çыхса шертине карта патне çӳлелле тăратса хуҫĕç, тет. Лешĕ пуйанĕ кусем укçине ăçта хунине курса тăраканскер, çĕрле тĕттĕм ҫухне, картиш-не кĕрсе хай шерте тăррине çакса хунă йенҫĕкри укçана антарса илет те йенҫĕк ăшне ĕне тислĕкĕ тултарса каллех ĕлĕкхи пек шертине тăратса хăварай. Пайтах вăхăт иртсен, укçа кирлĕ ҫухне ку çук çынни татах укçа илме шу-хăшласа шертине антарса йенҫĕкне астăват. Курăсăн, унта укçа вырăнне ĕне тислĕкĕ анҫах пулнине курса: „укçана, пăҫăланашшĕ, ĕне улăхса çинĕ иккен, йенҫĕк ăшне тула, тухса хăварнă», тесе çиленсе. кайран вара ĕнике те пусса çирĕ, тет.

## 5.

## Упапа ҫăваш тус пулнă.

Ҫăвашпа упа тус пулҫĕç, тет. Ҫăвашĕ упине:—„упа тус, аŷа çарăк акар?" тет.

— «Аŷа», тет упи те.

Хайхисем акрĕç, тет çарăк. Çарăкĕ пулҫĕ, тет кĕсенĕн пĕтес çук. Упи акнă çарăкĕсене хăне илме шухăшласа, кăна, ҫăвашне, калаť:—«Епĕ кунта мĕн çине утланса килнине есĕ пĕлейĕне? Пĕлсен, мĕн пур çарăк санăн пулĕ; пĕлмесен манăн», тет. „Есĕ утланса килнине епĕ пĕлсен, çарăксем манăн пулĕçĕ, пĕлеймесен санăн". тет.

— «Йурĕ», тет ҫăвашĕ те.

Упи тĕве çине утланса пыҫĕ, тет. Ҫăвашĕ хăй арăмĕ çине утланса пыҫĕ тет. Анҫах ҫăвашĕ арăмĕ çине утланнă ҫухне арăмийĕн пуçне кайалла туса утланҫĕ тет, çӳçне хӳре турĕ, тет.

Упи:—«Епĕ мĕн çине утланса килнине паллатăна?»—тесе ыйтрĕ, тет.

— „Паллатăп", тет ку та.

— „Мĕн çине?" тет.

— „Тĕве çине утланса килтĕн", тет ҫăвашĕ.

— „Палларăн", тет упи те.

Ҫăвашĕ те упаран:

— «Епĕ мĕн çине утланса килтĕм, есĕ упа тус, паллатăна?» тесе ыйтаť. Упи те пăхаť, пăхаť, тет нийепле те паллаймасť, тет: „Ку вара, ҫăваш тусăм, йепле выҫăх çине утланса килҫĕ-ши?.. Выҫăхĕ хăйĕ пăхсан: урисем пур, куҫĕ пур, хӳри пур, çурăмĕ пур, хырăмĕ пур, çăварĕ те пур...: Кунăн пуçĕ çташи??»... тесе пăхкалаť, тет.

Темĕнҫен пăхкаласан та нийепле те паллаймасан: «Çук ҫăваш тус, ку выҫăха епĕ паллаймаçтăп. Çарăксем санăн пулĕç» тет упи тĕлĕнсе.

## 6.

## Ахăр самана вăхăтĕнҫе.

Пĕр ҫын пит йурлă пулнă. Ун патне пĕре ҫапла мулла пырса кĕрет те кăна:—«есĕ акă пире пама тивĕҫлине нихăҫан та пĕр пус та памастăн», тет.—«Ей, мулла папай, епĕ мĕн парам ĕнтĕ, манăн нимĕн те ҫук, пĕр ĕнем анҫах», тет.

— «Ăна та пулин мана пар, мана панăшăн Турă сана пĕр ĕне вырăнне вунă ĕне, парĕ», тет мулли.

Ку, мĕокĕн, мулли ҫапла ыйтнăран, йулашки ĕнине муллине парса йарать. Пăхăсăн, мулланăн ку ĕнипе мĕн пурĕ вунă ĕне пулса тăрать. Пĕре ҫапла мулли ĕнисене ҫăл кутне шăварма тесе ҫак ҫук ҫын умĕнҫен хăваласа кайать. Вак патне хăваласа пырса ĕҫтерсен, ĕнисем калле килнелле таврăна пуҫлаҫҫĕ. Мулли хăй пĕр ҫынпа вак кутĕнҫе калаҫса йулать. Ҫав вăхăтра ку ҫук ҫыннăн ĕни хăйсенĕн ĕлĕкхи хапхи уҫă выртнине курсан унта кĕрех кайать; ун хыҫĕнҫен, паллă, ыттисем те кĕреҫҫĕ. Кĕсем ҫапла ушкăнпа картишне кĕнине курсан, ку, ҫук ҫынни, ҫасах пўртрен тўхса ĕнисене карташĕнҫен картана хупса хурать. Мулли ĕнисем унта кĕнине курсан, ыйта пуҫлать. Ку памасть, мана Турă паҫĕ, есĕ ху каларăн: „пĕр ĕне вырăнне сана Турă вунă ĕне парĕ“, тесе, тет. Темиҫе тапхăр ыйтсаң та ку ҫапах та ĕнисене муллана памасть. Мулли вара нимĕн тума, нимĕн калама алтăраса килне таврăнать. Пурăнсан, пурăнсан ку ĕнисене хăшне пусса ҫийет, хăшне сутса йарать; ҫапла хăтланса ĕнисене ҫисти пĕтерсе пăрахать. Ăна уншăн йалĕнҫи ҫыннисем пурте «пĕр хутлă, ухмах ҫын», тенĕ. Ĕнисене сутса та пусса та

пĕтерсен, çак çук çын хăне валли пĕр сурăх анҫах усра пуçлаŤ. Кăна пур те ухмах та ухмах тенĕрен, вĕреве-кен аҫасем пур те ушкăнпа кунăн çурҫĕ патне пыраççĕ те: «асатте, ыран ахăр самана пулаŤ, аŤа сурăхна пусса çийер! Пусса çимесен, пурĕ пĕр вăл йулаŤ», теççĕ. Ку та вĕсенĕн сăмахне итлесе сурăхне пусма пулаŤ. Пусса пĕçерсе çиме уҫук йашкине пĕçернĕ пек, хире илсе кайаççĕ. Унта илсе пыраççĕ: хурансем, шывсем, вутăсем йăтса. Сурăхне пусса, хуран çаксан, тытăнаççĕ пĕçерме. Сурăх ашĕ пиçиҫҫен ку çамрăк аҫисем, çийĕнҫи ҫи лайăх тумтирĕсене хывса пăрахса, кайаççĕ çывăхри вăрмана çырлана. Вутти пĕтсен, кŭ пурин лайăх тумтирĕсене те вута пăрахса çунтарса йараŤ. Лешсем çырларан килсен: «манăн тумтирĕмсем çта?» тесе шырама пуçлаççĕ. Аптăрапă йенне кунтан та ыйтаççĕ. Вĕсене хирĕç ку та:—«сурăх ашне пĕçерме вутă çитмерĕ, епĕ çавăнпа сирĕн тумтирĕрсене хуран айне хурса çунтарса петертĭм». тет. Лешсем кирли йĕре пуçлаççĕ.

— „Мĕшĕн йĕретĕр, тумтирĕр сире мĕне кирлĕ?... Ыран пурĕ пĕр ахăр самана пулаŤ, тетĕр?!“... тет. Нимĕн тума пĕлмесĕр ку, çамрăк аҫасем, пиçнĕ ашне çимесĕр йĕре-йĕре киле таврăнаççĕ‘ тет. Ку, çук çынни, пиçнĕ сурăх ашне килне йăтса таврăнса хăйех çийе пуçларĕ, тет.

## 7.

## Вунпĕр-мĕш ывăл.

Авал пĕр ватă çыннăн вун пĕр ывăл пулнă. Вŭннăшĕ кĕтŭ кĕтнĕ, пĕри, ҫи кĕçĕнни, пиҫҫĕшсене апат леççе пурăн-

нӑ. Ашшӗ кӑна пит йуратнӑ. Ыттисем ӑна сиссе ку, кӗҫӗн ывӑлӗ ҫине ҫиленсе ҫӳре пуҫлаҫҫӗ. Пӗре ҫапла: «аҫӑр ӑна вӗлерер», теҫҫӗ—те тытса типӗ пусса йараҫҫӗ. Ҫавсем патӗнҫен ҫулпа пӗр хуҫа иртсе пырай; тет. Кӗсем ӑна:—аҫа сутатпӑр, илетне?» тесе ыйтаҫҫӗ, тет.

— «Илетӗп!» тет ку та. Хай аҫана пусран кӑларса ҫак хуҫана сутса йараҫҫӗ. Хуҫи кӑна хӑйпе пӗрле илсе кайай. Килне таврӑнсан, унпа пӗрле иккӗш тытӑнаҫҫӗ пит аван сутӑ тума. Тавар илме пынӑ улпут хуҫаран ыйтай:

— „Ку санӑн ывӑлӑ пулай-и?“ тесе. Хуҫи те: епӗ ӑна сутӑн илтӗм», тет. Улпуҫӗ каллех: «вӑл аҫана мана сут-ҫӗ?“ тесе ыйтай.

— «Йурӗ, сутатӑп», тет—те хуҫи кӑна сутса йарай. Улпуҫӗ ҫак аҫана хӑй патне илсе кайсан, аван ҫынна пӗлсе, пур питӗрнӗ хуралтисенӗн ҫӑраҫҫи уҫҫисене кӑна шанса парай. Ҫавӑнтан вара ҫак аҫа хӑйте ҫисти пуйса кайай, тет.

## 8.

## Калмӑксем тӑлӑп ҫӗлеттерни.

Пӗр вӑкӑр пулнӑ, ӑна иккӗн кӗтнӗ: пӗри умӗнҫен, тепӗри хыҫалтан. Ӑна шӑварма тесе тинӗс хӗррине ҫирӗм-пилӗк ҫухрӑм хӑмӑшсем урлӑ илсе кайаҫҫӗ. Ҫав вӑкӑр шыв ӗҫме пынӑ ҫухне хӑмӑшсене ҫисе ҫул туса пынӑ. Тинӗс шывӗ хӗррине ҫитсен вӑкӑрӗ тытӗнҫӗ тет тинӗс шывне ӗҫме. Тинӗс шывӗ ку вӑкӑр ӗҫнӗҫемӗн типсе пыра пуҫларӗ, тет. Ҫур-

ри пĕтсен, пĕр пулă ишсе пыраĭ те çак вăкăра хыпса кайаĭ. Вăкăр тăршшĕне утас пулсан, çынна виç кунлăх утма çул пулаĭ. Пулă çав вăкăрпа çӳре-çӳре ҫисти вăйран сулăнса, кайран çыр хĕррине тухса, канса вырта пуçларĕ, тет. Ку çапла выртса тăнă вăхăтра пĕр ăмăрт кайăкĕ вĕççе пырса, кăна курсан, çĕклесе кайаĭ. Ăмăрт кайăкĕ те ывăнса, хирте пĕр каҫака такине курсан унăн майраки çине ларса, тытăнаĭ хай пулла çимешкĕн. Каҫаканăн сухалĕ айĕнҫе пĕр ватă старик çумăртан пытанса тăнă. Курăсăн, каҫака старике сухалĕпе хупласа тăнă. Старикĕ çӳлелле пăхса калаĭ: „пуçа мĕн пусрĕ?“ тет. Çав вăхăтра куçне пулă айак пĕрҫи шăмми çакланаĭ. Ăмăрт кайĕкĕ вĕçсе кайсан, старик те килне таврăнаĭ. Çулпа пынă ҫухне—„куçа мĕнле çӳпĕ кĕҫĕ?“ тет. Килне пырсан карҫăкне хай шăрлăкне, пулă шăммине, кăларттараĭ. Çавăн ҫухне хирпе хĕрĕх ăлав калмăксем пырса ҫарăнаççĕ, выртса çĕр каçмашкăн. Çĕрле тилĕ пыраĭ те калмăксенĕн кĕççерен тунă хӳмĕсене пурне те тĕртсе ӳкерсе кайаĭ. Пулă айак пĕр шăммине йăтса кайаĭ. Ирхĕне тăрсан калмăксем—«пирĕн хӳмесене кам тĕртсе укерҫĕ?“ теççĕ. Тилĕ ӳкернине пĕлсен, тытăнаççĕ хай тилле йĕрлеме. Тиллине тытсан, вĕлерсе çурри тирне сӳсе илеççĕ, çуррине хăвараççĕ. Çурри тирĕнҫен хĕрĕх калмăка хĕрĕх тăлăп çĕлетеççĕ.

## 9.

## Тĕлĕнмелле ĕç.

Пĕр çын вăрмана вутă тийеме кайаĭ. Вуттине урапи çине тийесен: „манăн вара пурттăм çта пулҫĕ?“ тесе пăхкалаĭ. Унта кунта пăхкаласан, ниçта та курмасĭ.